# Унӑн пултарулӑхне кевер чулпа танлаштарнӑ

**Канмалли кун хула урамӗпе уҫӑлса ҫӳренӗ чухне Шупашкарти Ирина Кузьминана пӗр пӗлтерӳ кӑсӑклантарнӑ. Суту-илӳ центрӗнче хӑйне евӗрлӗ ӑсталӑх класӗ иртни, ҫӑмран картина ӑсталама вӗрентесси пирки хыпарланӑ унта. Яланах ҫӗннине ӑса хывма, пӗр вырӑнта ларма-тӑма пӗлмен пике палӑртнӑ тӗле васканӑ. «Ҫӑмран кӑҫатӑ, тетте ӑсталанине илтнӗччӗ-ха, картина вара еплерех пулса тухӗ-ши?» – утнӑ май ҫуралнӑ шухӑшсем пӗрин хыҫҫӑн тепри.**

## Чун киленӗҫӗнчен те пӗлтерӗшлӗрех

Пӗр вӑхӑт ӳнер шкулне сукмак такӑрлатнӑ хӗрӗн ҫав самантрах ӗҫе пикенес килнӗ, заняти пуҫланасса чӑтӑмсӑррӑн кӗтнӗ. Тӗрлӗ тӗслӗ ҫӑмран вӑл салтак тӳми чечекне икӗ сехетрех хатӗрленӗ те картинӑна ҫуралнӑ кунпа амӑшне парнеленӗ. Сывӑх ҫынни ӑна алла тытсан лайӑх сӑнанӑ, мӗнлерех хатӗрленипе кӑсӑкланнӑ. Ку ыйтӑва Иринӑн халӗ тӑтӑшах илтме тивет. Ҫав заняти хыҫҫӑн сур ҫул иртсен кӑна хӑй тӗллӗн ӗҫлеме тытӑннӑ вӑл. Кирлӗ материал тупса туянсан виҫӗ кунра «Добермансем тата кӗркунне» картинӑна ӑсталанӑ. Ӑна тепӗр кунне ӗҫтешӗсене кӑтартнӑ. «Интереслӗ! Илемлӗ! Тӗлӗнмелле!» – хакланӑ вӗсем.

Пултарулӑх ҫыннисенчен чылай чухне хавхалану ҫӑл куҫӗ пирки ыйтаҫҫӗ. «Хавхалану мӗнне пӗлместӗп, вӑл килессе кӗтсе лармастӑп. Ҫак самантрах алӑ айӗнче ҫӑмпа хут пулсан ӗҫе пуҫӑнма пултаратӑп», – палӑртрӗ Ирина. Сӑрӑпа, кисӗтпе мар, ҫӑмпа тата хачӑпа илемлӗ ӳкерчӗксем хайлаканскершӗн канмалли кунсем те уяв пекех. Ун чухне кӑна ЧР Сут сантаӑк министерствинче тӑрӑшакан специалистӑн чун киленӗҫӗ валли ҫителӗклӗ вӑхӑт уйӑрма май килет. Анчах кирек хӑҫан та ӗҫлейместӗн иккен, картинӑна калӑпламашкӑн уяр ҫанталӑк кирлӗ. Тӳпене пӗлӗтсем карнӑ кун нимӗн те уйӑрса илме ҫукмӗн. Хастар пике пӗлтӗр нарӑс уйӑхӗнче кӑна алла ҫӑм тытнӑха, кӗркунне вара Чӑваш наци библиотекинче курав йӗркеленӗ. Ҫав вӑхӑт тӗлне 12 картина авторӗ пулса тӑнӑ хӗре ырӑ сӑмахпа мухтанӑ, хавхалантарнӑ. Чӑваш Енӗн тава тивӗҫлӗ ӳнерҫисем те искусствӑн хӑйне евӗрлӗхне, ӳнер пӗлӗвне илмен ҫын ҫавӑн пек картинӑсем хайлама пултарнине, ку техникӑна пуҫласа курнине кӑмӑллӑн палӑртнӑ. Хыҫҫӑнхи куравра вара ҫамрӑк ӳнерҫӗн пултарулӑхне Михаил Воробьев культуролог бриллиантпа танлаштарнӑ. Картинӑсенче тасалӑх, ырӑлӑх, сутӑ, ӑшӑлӑх пуррине палӑртнӑ. Паллах, ку Иринӑна пухмача пуянлатма хавхалантарнӑ.

«Ҫӑм акварелӗ» техникӑпа усӑ курса тӗрлӗ жанрта картина «ӳкерме» май пур. Тӗрлӗ тӗслӗ ҫӑма сийлӗн-сийлӗн типтерлӗн хурса тухмалла, ҫиелтен кантӑкпа витмелле. Унсӑрӑн ӳкерчӗк ҫеккунтрах саланать. Ҫапла, пӗрчӗсене хут ҫумне ҫирӗплетмеҫҫӗ, кантӑкпа ҫеҫ пусӑрӑнтараҫҫӗ. Пуҫланӑ картинӑна Ирина типтерлӗн упрать, кӑшт ҫил вӗрни те ӑна сиенлетме пултарать. Пике ҫӑмран ӳкерчӗксем «хайласси» чун киленӗҫӗнчен те пысӑкрах пӗлтерӗшлине палӑртрӗ. Шупашкарти ӳнер музейӗнче курав йӗркеленӗ хыҫҫӑн Ирина тӑхтама, ӑсталӑх шайне ӳстерме шут тытнӑ. Унӑн тӗллевӗ – калӑпӑшӗпе пысӑкрах картинӑсем тӑвасси. Хальхи вӑхӑтра хӗр шӑпах ҫавӑн йышшисемпе ӗҫлет.

## Гран-при – Иринӑн!

Иринӑшӑн кӑҫалхи черетлӗ ҫуралнӑ кунӗ асра юлӗ. Ака уйӑхӗн вӗҫӗнче ҫуралнӑскер эрне маларах Пӗтӗм тӗнчери пултарулӑх конкурсне хутшӑннӑ та... чи сумлӑ наградӑна, гран-прие, ҫӗнсе илнӗ! Ҫӗршывӑн тӗп хулине Ирина пилӗк картинӑпа ҫитнӗ. Пӗрне, унччен никам та курманскере те, пӗрле илнӗ. «Раҫҫейри искусствӑсен эрнинче» шӑпах вӑл «Классика искусстви» уйӑрмра чи пысӑк бала тивӗҫнӗ. «Иккӗн» ятлӑскере конкурс-курав иртекен пысӑк суртра, алӑкран кӗрсенех курӑнмалла, вырнаҫтарнине асӑрхасан Ирина хӗпӗртенӗ. Пин-пин картинӑран тӗрлӗ ҫӗршывран ҫитнӗ жюри хӑйӗн ӗҫне палӑртасси пирки шухӑшлама та пултарайман вӑл. Тупӑшӑва профессионал ӳнерҫӗсемпе искусствӑна юратакансем тата студентсем хутшӑннӑ. «1-мӗш вырӑн йышӑнатӑпах!» – амӑшне Мускава тухса каяс умӗн каланӑ сӑмахсене тӳрре кӑларнӑ Ирина. Ун чухне вӑл гран-при наградӑ пурри пирки пӗлмен, хӑйӗн хушаматне илтсен те ӗненеймен.

«Пӗрремӗш хут ҫакӑн пек шайри конкурса хутшӑнма палӑртнине никама та пӗлтермерӗм, ҫӗршывӑн тӗп хулине каймалли кун ҫитсен кӑна аннене, сывӑх ҫынсене каларӑм. Тӗрӗссипе, хам ҫӗнтернине халӗ те ӗненместӗп. Ҫак курава хутшӑнмашкӑн мана шӑпа пӳрнӗ тейӗн, отпуск кунӗсем те конкурспа пӗр килчӗҫ. Тӗлӗнмелле! Отпуска эпир раштав уйӑхӗнчех палӑртса хунӑччӗ. Гран-прие тивӗҫнӗ «Иккӗн» картина – ню жанрта хатӗрленӗскер. Ӑна республикӑри куравсене хутшӑнтарманччӗ. Ҫарамас каччӑпа хӗре сӑнланӑ унта. Хама килӗшнӗ пур ӳкерчӗке те эпӗ калӑплама хатӗр, хӑш чухне сӑнарсене, пейзажсене шухӑшласа кӑларатӑп», – каласа кӑтартрӗ ҫамрӑк ӳнерҫӗ. Вӑл хатӗрленӗ ытти картина та тӗрлӗ номинацире мала тухнӑ. Ҫӗнтерӳҫе анлӑ пир, мольберт, акӑлчан чӗлхине онлайн мелпе вӗренмелли сертификат парнеленӗ, дипломсемпе чысланӑ.

Чун ыйтнипе искусство енне туртӑннӑ пикен ӗҫӗсенче, уйрӑмах ҫынсене сӑнланисенче туйӑмлӑх, юрату, ҫепӗҫлӗх палӑрать. Нумаях пулмасть вӑл тин ҫеҫ ҫуралнӑ ачана ҫупӑрлакан арҫынна пир ҫине «ӳкернӗ». Ҫакӑн евӗр картинӑсене кун ҫути парнелеме мӗн хистет-ха художника? «Пӗчӗк ачана юриех амӑшӗпе мар, ашшӗпе сӑнларӑм. Ҫирӗп, вӑйлӑ арҫын алли пепкене ҫупӑрлани хӳтӗлеве, ҫепӗҫлӗхе, ӑшӑлӑха сӑнлать. Ашшӗсем тӑван тӗпренчӗкӗсене ан пӑрахчӑр, ун пек тӗслӗхсем хальхи вӑхӑтра уйрӑмах нумай», – ӑнлантарчӗ Ирина. Тепӗр енчен «Иккӗн», «Ачапа ашшӗ» картинӑсемпе автор ҫемье хаклӑхӗсене те палӑртасшӑн. Чӑн юрату, асамлӑх, тӳрӗ кӑмӑллӑх, тасалӑх пуррине ӗненнӗрен те пуль ӳкерчӗксем чунлӑ пулса тухаҫҫӗ. Ӳнерҫӗшӗн ҫемьерен хакли ҫук, вӑл Турӑ ҫырнине тӗл пулса туслӑ йышпа пурӑнма ӗмӗтленет. Ултӑ ачаллӑ ҫемьере ҫитӗннӗ хӗр – шкултан кӗмӗл медальпе, И.Я.Яковлев ячӗллӗ ЧППУран тата тепӗр аслӑ вӗрентӳ учрежденийӗнчен хӗрлӗ дипломпа вӗренсе тухнӑ. Пурнӑҫ тӑршшӗпех пӗлӗве, тавра курӑма анлӑлатмашкӑн тӑрӑшать вӑл, ҫавӑнпах икӗ професси алла илнӗ. 22 картина авторне ӗҫре, пултарулӑхра, спортра ҫитӗнӳ тума хастарлӑх тата пурнӑҫа чунтан юратни пулӑшать. Ку пуҫламӑшӗ кӑна-ха. Тӗрлӗ ҫӗршыври куравсене хутшӑнма палӑртнӑ хӗрӗн ӗҫӗсем малашне тӗнчипех паларасса шанатпӑр.

**Нина ЦАРЫГИНА.**
**Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.**







● Ирина КУЗЬМИНАН ӗҫӗсем.